Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

8 (7753) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи февралĕн (нарăс) 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Райадминистрацире

## Пултаруллисене – Хисеп грамоти

***Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн январĕн 21-мĕшĕнчи 25 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Тамара Васильевна НИКОЛАЕВАНА**, «Моргаушский автомобильно-технический сервис» уçă акционерлă обществăн строительсен участокĕн штукатур-малярне;

– **Александр Григорьевич БОЧКИНА**, «Моргаушский автомобильно-технический сервис» уçă акционерлă обществăн водительне;

– **Лидия Пименовна ФЕДОРОВАНА**, «Свобода» хуçалăхăн Çатракассинчи сĕтçу фермин возчикне;

– **Светлана Петровна ВАСИЛЬЕВАНА**, районти тĕп больницăн ача-пăча уйрăмĕн заведующине.

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн январĕн 22-мĕшĕнчи 30 № йышăнăвĕпе*** «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн трактористне **Николай Иванович ВАСИЛЬЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ĕçре тăрăшуллисем

## «Тавах тутлă апат-çимĕçшĕн»

***Апатланнă хыççăн килсе çӳрекенсем çапла тав тунине тăтăшах илтетĕн кунта. Сăмах вара Муркаш райповĕн район центрĕнчи пасар территорийĕнче вырнаçнă пельмень пĕçерекен кафе пирки пырать. Тăрăшуллă коллектив вăй хурать кунта. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Т.А. Кузнецова буфетчица райпон обществăлла апатлану системинче 17 çул, Т.А. Осиповапа И.И. Поликарпова поварсем 24 тата 10 çул тăрăшаççĕ. Хăйсен ĕçне аван пурнăçланăшăн, апатланакансене ăшă кăмăл парнеленĕшĕн хисеплеççĕ вĕсене.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

2010 çулхи халăх çыравĕ

## Хатĕрленӳ ĕçĕсем анлă сарăлнă

Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче февралĕн 4-мĕшĕнче ЧР Правительствин пĕтĕм Раççей халăхĕн 2010 çулхи çыравне Чăваш Республикинче хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвĕ ирттнĕ. Сăмах унта çак ответлă та пĕлтерĕшлĕ мероприятие хатĕрленессипе ирттнĕ çул туса ирттернĕ ĕçсем тата умра тăракан задачăсем пирки пулнă.

Ларура палăртнă тăрăх, 2009 çул валли палăртнă хатĕрленӳ планне пĕтĕмпех пурнăçланă. Адрес хуçалăхне йĕркене кĕртнĕ, çуртсене инвентаризациленĕ, çырава районланă, унăн пĕтĕмĕшле планне хатĕрленĕ.

Регистраторсем çуртсен списокне тата картографи материалĕ вĕсене мĕнле вырнаçтарнипе пĕр килнине тĕрĕсленĕ. Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле планĕпе килĕшӳллĕн çыравăн 206, инструкторсен 797, шутлавăн 3172, стационарăн 631 участокне тумалла. Асăннă мероприятие хатĕрленсе ирттерме вăхăтлăх ĕçченсем 5,6 пин çын кирлĕ пулаççĕ.

Çывхарса килекен çырав пирки çынсене пĕлтерес тĕлĕшпе чылай ĕçленĕ. Ку енĕпе массăллă информаци хатĕрĕсен мелĕсемпе туллин усă курнă. Халĕ вара вăхăтлăх ĕçченсене вĕрентессипе çине тăрса тимлемелле пулать. Кунпа пĕрлех халăх хушшинчи ăнлантару ĕçĕн витĕмлĕхне те чакармалла мар.

* * *

Республика Культура министерстви республикăра тата унăн тулашĕнче пурăнакан чăвашсем 2010 çулхи халăх çыравне хутшăннин темипе логотипсем хатĕрлессипе конкурс ирттерет. Унта кирек кам та хутшăнма пултарать. Проектсене Corel Draw, Adobe Potoshop программăпа (dpi 300-тен кая пулмалла мар) хатĕрлемелле. Вариантсене А-4 формат çине хура-шурă тата тĕрлĕ тĕспе пичетлемелле.

Конкурс проекчĕсене электронлă майпа тата хут çине пичетленисене 2010 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен ЧР Культура министерствинче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт, 608-мĕш кабинет, тел.: 62-68-35; электронлă почта: kult22@cap.ru.

Çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе укçан парнесем кĕтеççĕ.

**Хамăр инф.**

В.В. Путин Чăваш Енре пулнă май

## Спортра пысăк çитĕнӳсем пулĕç

Январĕн 25-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Владимир Путин, РФ Правительствин Председателĕн çумĕ Сергей Иванов, Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров тата ытти официаллă çынсем Чăваш Республикинчи пăр çинче ярăнмалли пĕрремĕш «Новое поколение» кермене уçнă çĕре хутшăннă.

Владимир Путин çĕнĕ спорт кермене уçнă ятпа пурне те чĕререн саламланă. «Пурсăра та сире çĕнĕ спорт сооруженине уçнă ятпа чĕререн тата пур кăмăлтан саламлатăп. Халĕ ĕнтĕ сирĕн хулара пурăнакансен те хальхи хăтлă та илемлĕ, çĕнĕ технологиллĕ сооруженипе усă курма май пур. Кунта çемьесем канма, çамрăк спортсменсем хăйсен ăсталăхне ӳстерме пултараççĕ. Паллă ĕнтĕ, пурте тĕнче шайĕнчех пысăк çитĕнӳсем тăваймĕç, анчах та пурин те вĕсен çирĕп сывлăх, тӳсĕмлĕхпе чăтăмлăх, чăн-чăн спорт характерĕ пуласси пирки иккĕленӳ çук. Çак сооружение тунă, хута янă çĕре хутшăннисене пурне те эпĕ тав сăмахĕ калатăп. «Новое поколение» фонд Инçет Хĕвел тухăçĕнчен тытăнса Хĕвел анăç чиккисем таранах çĕшывăн пĕтĕм территорийĕнче вуншар объект хута янă ĕнтĕ. Сире ăнăçусем, спорт çитĕнĕвĕсем тата лайăх, хастар кăмăл сунатăп. Саламлатăп»,– палăртнă вăл.

Кайран чăвашсен авалхи Сурхури йăлине кăтартнă, фигурăллă ярăнакансен Шупашкар хулинчи шкулĕнче вĕренекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» тата Шупашкарти «Спартак» командăсем пăр çинче хоккей ăмăртăвĕнче вăй виçнĕ. Çивĕч кĕрешӳре республикăн тĕп хулин команди çĕнтернĕ. Унта Александа Белова хĕр ача та вылянă.

РФ Правительствин Председателĕ В. Путин тата ЧР Президенчĕ Н. Федоров пăр çинче ярăнмалли керменре пуллнине асăнса çуртри стенд çине автографсем хăварнă.

Спорт сооруженийĕнче 66 метр тăршшĕ тата 36 метр сарлакăш тренировкăсен витнĕ катокĕ вырнаçнă, тренировкăсен залĕ, пĕтĕмĕшле физкультура занятийĕсем ирттермелли, тренерсен пӳлĕмĕсем, медпункт, ытти хушма учрежденисем пур. Строительствăн пĕтĕмĕшле хакĕ 180 миллион тенкĕпе танлашать. Кермене спорт программисен «Новое поколение» ыр кăмăллăх фончĕ пулăшнипе ĕçе кĕртме май килнĕ. (Попечительсен канашне РФ Правительствин Председателĕн çумĕ Сергей Иванов ертсе пырать). Фондăн тĕп тĕллевĕ – ачасемпе çамрăксене физкультурăпа спорта ытларах явăçтарасси, сывă пурнăç йĕркине сарасси.

**Хамăр инф.**

Фермăсенчи хĕл кунĕсем

## Ăнăçуллăрах ĕçлеме майсем пур

***2009 çулхи ял хуçалăх çулталăкĕ 2010 çулхипе улшăнчĕ. Мĕн кĕтетпĕр эпир кăçал, мĕн çине таянса ĕçлейретпĕр? Фермăсенчи выльăхсен продуктивлăхне пăхсан тата хĕл валли янтăлана апат хисепĕпе пахалăхне шутласан, алă усмаллиех курăнмасть. Пурнăç кăларса тăратакан çĕнĕлĕхсене тивĕçлĕ йышăнса ыранхи куна пăхса ĕçлемелле. Çакна валли пирĕн условисем çук мар. Ăна фермăсенчи хĕл кунĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх пăхакансем патĕнче кăрлачăн 27-мĕшĕнче иртнĕ пĕрлехи кун пĕтĕмлетĕвĕсем çинче район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-эксперчĕпе Т. А. АЛЕКСЕЕВАПА чарăнса тăтăмăр.***

**– Выльăх пăхакансен ответлă тапхăрĕ пырать. Çак вăхăтри производство – çуллахи-кĕркуннехи ĕçсен кăшăлĕ. Ман шутпа кам мĕн чухлĕ паха апат хатĕрленине кура ӳсĕмĕсем те куç умĕнчех. Çу кунĕсене «юрласа» ирттернисем вара паян пуç чиксе çӳреççĕ. Çапла мар-и?**

– Хирĕçлеместĕп. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче халĕ иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетессипе, малашлăх чикĕсене палăртассипе ĕçлеççĕ. Çывăх кунсенче кунта кашни ыйту çинех тивĕçлĕ хурав пуласса шанас килет. Кунпа пĕрлех çĕнĕ ял хуçалăх çулĕнчи пĕрремĕш, хĕле кĕнĕренпе 4-мĕш уйăх вĕçленчĕ. Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕ çине пăхмасăр паян кăрлач уйăхĕнчи тата хĕл тапхăрĕнчи пĕтĕмĕшле ĕçсене тишкерме вăхăт. Пĕлтĕрхи октябрь-декабрь уйăхĕсенче эпир пĕтĕмпе 2010,5 тонна сĕт (2008 çулхи асăннă вăхăтпа танлаштарсан 102 процент), 348,6 тонна (67,4 процент) аш-какай туса илтĕмĕр. Мăйракаллă шултра выльăхсенчен ашкакай илесси 1640 центнерпа (108 процент), сыснасенчен продукци илесси 1394 центнерпа (118 процент) танлашрĕ. Уйрăм хуçалăхсене илсен çакă курăнать: Суворов ячĕпе, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен, «Герой», «Свобода», «Оринино» хуçалăхсенче выльăхсен йышне ӳстереççĕ. Çак тапхăрта мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 636 грамм (çулталăк каяллахинчен 89 грамм пысăкрах), сыснасен 365 грамм (6 грамм нумайрах) пулчĕ. Пĕтĕмĕшле кăтарту унченхи хĕл тапхăрĕнчинчен ӳсĕмлĕрех пулсан та, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи производство ыйтăвĕ нумай хуçалăхсенче çивĕч тăнине те пытарма çук.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, кукамая – Кăпас ялĕнче пурăнакан **Валентина Андреевна ЛАПТЕВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Икĕ хĕрпе икĕ ывăл ӳстерсе вĕсене пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Аннене юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр, телей, ăнăçу сунатпăр. Санăн сăн-питӳнте яланах йăл кулă çиçтĕр. Эсĕ пуррипе чăнахах тĕнче илемлĕ.

**Саламлатăп: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрӳшĕсем, кинĕ, мăнукĕсем.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, çепĕç чунлă аннене, аппана – Тойкилтĕ ялĕнче пурăнакан **Алина Кимовна СОКОЛОВАНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр! Кил-йыш вучахĕн ăшшине хушса пыма çăл куç шывĕ пек тапса тăракан хавхалану, çут тĕнче илемĕпе киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, вăй-хал, çутă ăраскал, иксĕлми телей сунатпăр. Санпа юнашар яланах хăвăн пек ырă кăмăллă та тӳрĕ чунлă тăванусемпе тусусем пулччăр. Кунсерен сăнпитӳнте йăл кулă çиçтĕр, телейĕ умăнтах тăтăр. Эсĕ пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх пулса тăратăн. Эпир сана юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, Романовсем, тăванĕсемпе кӳршисем.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, ытарайми ывăлăма, савнă мăшăра, юратнă аттене, кукаçине, хисеплĕ хăтана, ырă кăмăллă тăванăмăра – Çĕньял Оринин ялĕнче пурăнакан **Николай Викентьевич ВОЛКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эс пурришĕн Турра тав тăватпăр. Ырă кăмăлушăн, пирĕншĕн тăрăшнишĕн çĕре çити тайма пуç. Сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр!

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, юратнă мăшăрĕ, ывăлĕ, 2 хĕрĕ, кинĕ, кĕрӳшĕ, 2 мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана, кукамая – Кăпас ялĕнче пурăнакан **Калиста Порфирьевна СОКОЛОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çак тапхăрта хăйĕн ĕмĕрĕнче тем те тӳссе чĕре витĕр кăларнă пулĕ. Икĕ ывăлпа хĕр ӳстерсе вĕсене пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă. Çирĕп сывлăх, телей, канлĕ ваттлăх сунатпăр. Хуйхă-суйхă, инкек-синкек санран аякра тăччăр.Эсĕ пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх пулса тăрăн.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, 5 мăнукĕ, 4 прамăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**